Тукташ И. К.В. Иванов творчестви тата чăваш фольклорĕ / И. Тукташ // Сунтал. – 1940. – № 8. – С. 22-29.

*ИЛЬЯ ТУКТАШ*

# К. В. ИВАНОВ ТВОРЧЕСТВИ тата ЧĂВАШ ФОЛЬКЛОРĔ

I.

Литература историне тĕпченĕ чух эпир нимĕнрен малтан çакна куратпăр: пур аслă писательсемпе поэтсемпе те хăйсен пултарулăхне халăх творчествин сĕткенĕсемпе çеçкелентерсе пынă. Пирĕн чăвашсен революцичченхи поэчĕсем халăх творчествипе питĕ анлăн усă курнă. Çавна пула вĕсем çырнă произведенисенчен чылайĕшĕсем, сăмах халлĕнех, халăх хушшинче сарăлса, пурăна-киле халăх произведенийĕсем пек пулса кайнă. Кăна темĕн чухлĕ тĕслĕхсемпе те çирĕплетме пулать. Сăмахран, М. Ф. Федоров хăйĕн «Арçури» ятлă поэмине иртнĕ ĕмĕрĕн тăхăрвунăмĕш çулĕсенче çырнă. Пичетленессе вăл 1908-мĕш çулта пичетленнĕ. Çапах та ăна пичетрен тухиччен чăвашсем хушшинче мĕн пур юмахçă-халапçăсем тенĕ пек пĕлсе тăнă. Тепĕр факт: К. В. Ивановăн „Нарспи" ятлă поэми пичетрен тухнă-тухманах халăх хушшине çав тери хăвăрт сарăлса, фольклорăн чи паха шедеврĕсемпе пĕр танах вилĕмсĕр пулса юлнă.

Халăхпа писатель творчестви хушшинче икĕ тĕрлĕ çыхăну пулса пырать. Пĕр енчен писатель хăй, халăх творчествипе тĕплĕн усă курса, хăйĕн произведенийĕсене унăн сĕткенĕпе чечеклентерет, тепĕр енчен халăх та хăйне çывăх шухăшлă произведенисене пĕтĕмĕшпех йышăнса, ăна хăйĕн фольклор репертуарне кӳртет. Çапла вара хăш та пĕр чухне аслă генисен произведенийĕсем темиçе ĕмĕр иртнĕ хыççăн халăх хушшинче ятсăрах çӳреççĕ.

Çак фактсем пире акă мĕнле вывод патне илсе тухаççĕ: чи витĕмлĕ те нихăçан вилми произведенисен хăвачĕ—вĕсем халăх кăмăлĕпе уйăрăлми тачă çыхăнса тăнинче. Вĕсем халăх ĕмĕчĕсенчен çуралса тухаççĕ, халăх сăмахлăхĕпе пуянланаççĕ, вара историе халăх сăмахлăхĕн чи çӳллĕ пусăмĕнчи произведени пек пулса вырнаçса юлаççĕ. Çавăнпа вĕсем вилĕмсĕр, мĕншĕн тесен халăх хăй вилĕмсĕр. Ахальрен мар А. М. Горький Пĕтĕм Союзри Совет Писателĕсен пĕрремĕш съездĕнче çапла каланă:

> „Я снова обращаю ваше внимание, товарищи, на тот факт, что наиболее глубокие и яркие, художественно совершенные типы героев созданы фольклором, устным творчеством трудового народа. Совершенство таких образов, как Геркулес, Прометей, Микула Селянинович, Святогор, далее доктор Фауст, Василиса Премудрая, иронический удачник Иван-дурак и наконец—Петрушка, побеждающий доктора, попа, полицейского, чорта и даже смерть,—все это образы, в создании которых гармонически сочетались рацио и интуицио, мысль и чувство. Такое сочетание возможно лишь при непосредственном участии создателя в творчестве действительности, в борьбе за обновление жизни".

* * *

Чăваш поэзийĕн классикĕ Константин Васильевич Иванов патша Российĕн „халăхсен тĕрми" пулса тăракан саманинче пурăннă. Çав саманара вак халăхсен пурнăçĕ пушшех те йывăртарах пулнă. Вĕсене пĕр енчен патша колонизаторĕсем хĕсĕрленĕ, тепĕр енчен хăйсен харампырĕсем—улпутсем, куллаксем, пупсем вĕсен юнне ĕмсе пурăннă. Çав пусмăрлă хĕн-хур саманара чăваш халăхĕ хăйĕн культурине аталантарасси çинчен калаçмалли те пулман. Анчах вĕри чĕреллĕ „Нарспи" авторĕ К. В. Иванов, обществăн кивелсе пăнтăхнă законĕсене хирĕç тăнăскер, хăйĕн шăпи телейсĕр иртнĕ пулин те, халăхăн ĕмĕтне ĕненнĕ, унăн пулас телейне шанса пурăннă. Çавăнпа та вăл хăйĕн ĕçĕнче нимĕнрен малтан халăх чунне, халăх кăмăлĕпе туйăмĕсене, халăх ĕмĕтне тĕрлесе хăварнă. Çакна вăл тăван халăхăн пурнăçне, унăн йăлисемпе уявĕсене, юррисемпе такмакĕсене тата халапĕсемпе юмахĕсене тĕплĕн вĕреннипе тума пултарнă.

К. В. Иванов фольклорпа мĕн тери анлăн усă курнине унăн кашни произведенийĕнчех курма пулать. Вăл чăваш хушшинче çӳрекен юмахсене тĕплĕн пуçтарнă, вĕсене сăвăласа илемлетнĕ, халăх юррисем нумай çыра-çыра илнĕ, вĕсемпе ăстан усă курнă, халăх сăмахлăхĕпе усă курса татах та пысăкрах та илемлĕрех произведенисем çырма ĕмĕтленнĕ Анчах та пирĕн, талантлă поэт хăйĕн творчествинче фольклорпа мĕн тери тата мĕнле майсемпе усă курни çинчен тĕплĕнрех пĕлес тесен, чăваш фольклорне пухас ĕçри хăш-пĕр паллăрах фактсем çинче кăштах чарăнса тăмалла.

II.

Чăваш фольклорĕ, ытти халăхсен фольклорĕ пекех, питĕ авалах пулнă, анчах та XIX ĕмĕрччен ăн никам та пухса тĕпчекен пулман. Тĕрĕссипе каласан, XVIII ĕмĕрччен чăваш фольклорĕ çинчен çеç мар чăваш халăхĕ çинчен те сахал пĕлнĕ, XVIII ĕмĕр вĕçĕнче кăна чăвашсем çинчен çырнисем тĕллĕн-тĕллĕн пичетлenme пуçланă. Чи малтан чăвашсем çинчен ютçĕршыв çынни Миллер „Описание живущи в Казанской губернии языческих народов" ятлă кĕнекере кĕскен çырса кăларнă. Унччен малтан чăваш халăхĕ çинчен Страленберг „Историческое опис ние северной и восточной части Европы и Азии" ятлă кĕнекере çырнă пулнă, анчах вăл тĕплĕ сведенисемех парайман. Каярахпа чăвашсем çинчен çырнисем П. И. Рычков, Лепехин, Паллас, Фольк, Георги т. ыт. кĕнекисенче те тĕл пулаççĕ.

Кунта çакна палăртса хăвармалла: чăвашсем çинчен çыракан авторсем нимĕнрен малтан вĕсене этнографи тĕлĕшĕнчен ытларах çутатса пама тăрăшнă. Халăхăн духовнăй культури вĕсене сахал интересленĕ, çавăнпа чăваш фольклорĕ те вăл вăхăтри . тературăра хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнайман.

Чăваш фольклорĕн тĕслĕхĕсем чи малтан А. А. Фукс кĕнекинче („Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии". Казань, 1840) пичетленсе тухнă. Фукс хăй чăвашла пачах та пĕлмен, çавăн ... халăх поэзийĕн лайăх тĕслĕхĕсене те суйласа ил... пултарайман. Вăл хăй кĕнекинче илсе кăтартна 2 чăваш юррине нихăш енчен те чăваш фольклор... чи паха тĕслĕхĕ тесе шутлама çук. Унтан та ытт... рах: Фукс чăваш чĕлхине питĕ чухăн тесе шутлан. Ун шухăшĕпе пĕтĕм чăваш чĕлхинче те 1646 сă... çеç пулнă иккен!

Ĕлĕкхи саманара чăваш чĕлхи çинчен çапла хăшлакансем пĕр Фукс анчах пулман. Шăп та ...



**Укерчӗк ҫинче: „Нарспипе Сетнер вӑрманта тӗл пулни“ („Нарспи“ поэмӑран). Ӳкерчӗкне Г. Харлампьев художник тунӑ.**

*(В. Кудрявцев фото-репродукцийӗ).*

ҫав шухӑшах тата 15 ҫул иртнӗ хыҫҫӑн чӑвашсем ҫинчен тӗрлӗ „заметкӑсем“ пухса ҫӳренӗ генеральный штаб офицерӗсем каласа панӑ. Вӗсем Россия империйӗн статистики валли материалсем пухса ҫӳренӗ пулнӑ та, ҫав майпа чӑвашсем ҫинчен те хӑш-пӗр сведенисем тӑратнӑ. Каярахпа вара вӑл сведенисем М. Лаптев ҫырнӑ „Материалы для географии и статистики России, собранные офицерами генерального штаба; Казанская губерния“ (1861 ҫ.) ятлӑ кӗнекере пичетленсе тухнӑ. Акӑ мӗн каланӑ ҫав кӗнекере чӑваш халӑхӗн чӗлхипе духовнӑй культури ҫинчен:

„О развитии чувашского народа вообще можно сказать, что оно стоит пока очень низко; лучшим доказательством этого служит их язык, — язык бедный, скудный, особенно в выражении отвлеченных понятий. В нем всего полторы тысячи слов. Когда приходится чувашенину сказать о том, что выходит из круга его понятий, он прибегает не к голове, а к горлу и жестам. Скудость выражения, чувств, понятий яснее всего высказывается в их песнях“ (246 стр.).

Чӑваш халӑхӗ ҫинчен ҫапла шухӑшсем сарни, паллах, унӑн пурнӑҫӗпе, чӗлхипе, культурипе тата искусствипе анлӑн интересленме чӑрмантарса тӑнӑ. Кӑна эпир чӑвашсем ҫинчен ҫырнӑ литературӑна шутласа тухнинченех те питӗ лайӑх курма пултаратпӑр.

Чӑваш этнографийӗпе фольклорӗ ҫинчен ҫырнӑ татьясем 1846—1877 ҫулсем хушшинче Хусанти Императорский Университет ҫумӗнче тухса тӑракан „Известия общества археологии, истории и этнографии“ ятлӑ журналра пичетленнӗ. Вӗсенчен уйрӑмӑнах Спиридон Михайлов ҫырнӑ „Чувашская свадьба“ (1852 ҫ.) тата „Чувашские разговоры и сказки“ (1853 ҫ.) ятлӑ очерксем паха вырӑнта тӑраҫҫӗ. Спиридон Михайлов, чӑваш хушшинченех тухнӑскер, Чикме хулинчи Земский суд ҫумӗнче переводчик пулса пурӑннӑ тата исправник патӗнче письмоводительре ӗҫленӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл Хусан губернинчи статистический комитетӑн член-сотрудникӗнче тӑнӑ. Спиридон Михайлов хӑйӗн ӗмӗрӗ тӑршшӗнче чӑвашсем ҫинчен пайтах статьясем ҫырса пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав паха ӗҫсемшӗн ӑна Императорское географическое общество кӗмӗл медаль парса парнеленӗ.

Малалла чӑваш фольклорне пухас енӗпе Риттих А. Ф., Мальхов, Регули, Буденц т. ыт. хӑш-пӗр ученӑйсем ӗҫлекеленӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, чӑваш поэзийӗн классикӗ К. В. Иванов ҫураличчен, чӑваш фольклорӗн хӑш-пӗр тӗслӗхӗсем ҫав асӑннӑ кӗнекесенче кӑна пичетленсе тухнӑ пулнӑ. Анчах ҫав авторсенчен пӗри те вӑл фольклора наука кӑтартнӑ пек тӗпчесе сӑнаман, унӑн художествӑллӑ пуянлӑхӗсене тарӑнӑн уҫса кӑтартман. Фольклор произведенийӗсене вӗсем е иллюстраци материалӗ вырӑнне, е тата халӑх поэзийӗн тӗслӗхӗсем вырӑнне ҫеҫ паркаланӑ.

Ҫак тапхӑрти фольклористсем хушшинче икӗ тӗрлӗ юхӑм пуҫланса кайнине палӑртма пулать. Пӗр енчен халӑх творчествин пӗтӗм социаллӑ шухӑшне пытарма е сирсе яма тӑрӑшакан дворянла фольклористикӑн туртӑмӗсем сисӗнме пуҫлаҫҫӗ, тепӗр енчен—миссионерсемпе пуп таврашӗсем пуҫӗсене ҫӗклеҫҫӗ. Малтанхи юхӑмӑн представителӗсем фольклорта нимӗнле класлӑх та ҫук, тесе вӗрентнӗ пулсан, иккӗмӗш юхӑмра тӑраканнисем фольклор произведенийӗсем урлӑ халӑх хушшине тӗн сӗрӗмӗ сарма, чиркӳ авторитетне ытларах ҫирӗплетме тӑрӑшнӑ. Ҫак шухӑшпа чӑваш фольклорне пухас ӗҫе миссионерсем, пуп таврашӗсем хутшӑнаҫҫӗ, турӑ ҫырни ҫинчен, христос тӗнӗ ҫинчен калакан легендӑсем фабрикацилесе пичетлеме тытӑнаҫҫӗ. Авалхи тӗне пӑрахасшӑн мар пулнӑ чӑвашсем хушшине вӗсем ҫав шухӑшсене вӑйпах сарма тӑрӑшаҫҫӗ.

Анчах та ӗҫхалӑхӗн сарлака массисем миссионерсен шухӑшӗсене ирӗккӗн йышӑнман, вӑл шухӑшсем питӗ тӑкӑскӑн кӑна сарӑлма пултарнӑ. Халӑх пупсемпе миссионерсене хирӗҫ хӑйӗн вичкӗн сӑмахлӑхӗпе кӗрешме тытӑннӑ. Юмахсенче, юрӑсенче, пословицӑсенче пупсене темӗн тӗрлӗ вӑйлӑ та ҫивӗч сӑмахсемпе питленӗ, вӗсенчен тем пек вӑйлӑн мӑшкӑласа кулнӑ.

III.

Ҫакӑн пек пулнӑ кивӗ саманан ирсӗр йӑлисене харсӑррӑн питлекен сӑвӑҫӑ К. В. Иванов умӗн кӗнекесене кӗрсе юлма пултарнӑ чӑваш фольклорӗн пуянах мар наследстви. Вуланӑ-и К. В. Иванов вӑл кӗнекесене, е вуламан-и,—кунта ун ҫинчен сӑмах пымасть, анчах пирӗншӗн ҫакӑ паллӑ: хӑйӗн вӑхӑтӗнчи чи прогрессивлӑ идейӑсемпе хавхаланнӑ поэт кӑмӑлӗ, вӑл кӗнекесене вуланӑ пулсан та, вӗсемпе нимӗн чухлӗ те килӗшме пултарайман. Мӗншӗн тесен вӑл хӑйӗн халӑхӗн сӑмах пуянлӑхне те, фольклор пуянлӑхне те питӗ лайӑх пӗлсе тӑнӑ. Ӑна вӑл хӑйӗн вилӗмсӗр „Нарспи“ поэмипе тата пӗтӗм чуна киллентерсе тӑракан сӑвӑллӑ юмахӗсемпе ҫирӗплетсе

панӑ. Ҫавӑнпа та К. В. Иванов творчествине вӑл вӑхӑтри ирсӗр саманан пӑнтӑхнӑ йӗркисене хирӗҫ хӗрӳллӗн протестлекен творчество тесе ҫеҫ мар, чӑваш халӑхӗн чӗлхипе пӗтӗм духовнӑй культури ҫинчен элек саракансене питлесе, вӗсен юрӑхсӑр теорийӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех аркатса тӑкакан творчество тесе те хакламалла.

Хӑй халӑхӗшӗн ҫунса тӑракан тап-таса чӗреллӗ поэтӑн, унӑн ирӗклӗ ӗмӗчӗсене ырласа юрланӑ чи малтанхи юрӑҫӑн хӑйӗн кӗске ӗмӗрӗ хушшинче ҫӳлте асӑннӑ шухӑшсене хирӗҫ ҫеҫ кӗрешме тивмен. Унӑн хӑй таланчӗ аталаннӑ вӑхӑтра этемӗн ирӗклӗ ӗмӗчӗсене пӑчлантарса пыракан хура реакциллӗ шухӑшсене хирӗҫ те вирлӗн кӗрешме тивнӗ. Ун пек шухӑшсене К. В. Иванов вӑхӑтӗнче фольклор урлӑ вӑйлӑн сарма тӑрӑшнӑ. Малтанхи революци хыҫҫӑнхи хура реакци тапхӑрӗнче чӑваш фольклорне тӗпчес ӗҫре икӗ хире-хирӗҫле вӑй кӗрешнине курма пулать. Пӗр енчен революцилле-демократла элементсем вӑй илсе пыраҫҫӗ, тепӗр енчен хура реакцин представителӗсем, кадетла буржуази хӳтлевҫисем пуҫӗсене ҫӗклеҫҫӗ. Вӑл тапхӑр ҫинчен ВКП(б) историйӗн кӗске курсӗнче акӑ ҫапла каланӑ:

„Революци ҫакна кӑтартса пачӗ: либеральнӑй буржуази халӑхпа мар, патшапа союз шыранине, вӑл контрреволюциллӗ вӑй пулса тӑнине, унпа килӗшни халӑха сутнипе пӗрех пулнине кӑтартса пачӗ.

Революци ҫакна кӑтартса пачӗ: рабочи класс ҫеҫ буржуалла-демократиллӗ революцин ҫулпуҫӗ пулма пултарнине, вӑл кӑна кадетла либеральнӑй буржуазие хӗссе кӑларма, хресченсене унӑн влиянийӗнчен хӑтарма, помещиксене ҫӗмӗрсе тӑкма, революцие вӗҫнех ҫитерме тата социализм валли ҫул уҫса хума пултарнине кӑтартса пачӗ" (ВКП(б) историйӗн кӗске курсӗ, чӑвашла издани, 113 стр.).

1905—07 ҫулсенчи историллӗ событисем чӑваш фольклорӗн исследователӗсем ҫине те хӑйсен влиянине хӑвармасӑр иртсе кайма пултарайман. Кадетла буржуази майлӑ ҫаптаракансем хӑйсен кӗҫҫе пичӗсем ҫинчи „демократиллӗ" маскисене ытларан та ытларах сирсе пӑрахса пынӑ, ытларан та ытларах патша майлӑ кайса ӳксе, юлашкинчен унӑн чи шанчӑклӑ хӳтлевҫисемех пулса тӑнӑ. Ҫак контрреволюцилле хура вӑй фольклорта епле палӑрса тухнине эпир Н. В. Никольскийӑн 1905-мӗш ҫулта тухнӑ „Взгляд чуваш на воинскую повинность" ятлӑ кӗнекинчен питӗ лайӑх куратпӑр. Ҫак кӗнекене Никольский малтанхи страницинчен пуҫласа мӗн вӗҫне ҫитиччченех пӗртен-пӗр ӗмӗтпе—патша правительствине хӳтӗлесе ырлас шухӑшпа ҫырнӑ. „Чӑвашсем патшана служить тӑваҫҫӗ, а патша вӗсене хӳтӗлет, тӑрантарать, сыхласа усрать. Вӗсем хушшинчи хутшӑну чӑн-чӑн чӗререн тухакан тарӑн юрату ҫинче тытӑнса тӑрать",—тесе ҫырать вӑл ҫав кӗнекен чи малтанхи страницинчех. Кунта авторӑн шухӑшне ӑнлантарса пама та кирлӗ мар,—вӑл ахалех те витӗр курӑнса тӑрать: патша чӑвашсене „хӳтӗлет, тӑрантарать, сыхласа усрать" пулсан, мӗншӗн юратас мар ун пек патшана, унӑн йӗркисене. Ҫак шухӑша ӗнентерешшӗн пулнӑ та ӗнтӗ Никольский хӑйӗн кӗнекипе.

Чи прогрессивлӑ идейӑсемпе хавхаланса пурӑннӑ революцилле-демократ К. В. Иванов ҫавӑн пек монархистла шухӑшсемпе нимӗн чухлӗ те килӗшмен. Анчах та вӑл хӑш-пӗр исследовательсем каланӑ пек революционер пулман; унӑн, революци ялавне харсӑррӑн ҫӗклесе, патша правительствине хирӗҫ уҫҫӑнах



Ӳкерчӗк ҫинче: „Тӑхтаман килӗнче" („Нарспи" поэмӑран). Ӳкерчӗкне Г. Харлампьев художник тунӑ.

(*В. Кудрявцев фото-репродукцийӗ.*)

тухма хӑюллӑхӗ те, вӑйӗ те ҫитеймен. Ҫавӑнпа та вӑл патша правительствин йӗркисене хирӗҫ урӑх меслетпе, литературӑри творчествӑн ытарлӑрах майӗсемпе усӑ курса кӗрешме тытӑннӑ. Кӑна эпир „Нарспи" поэма урлӑ та, сӑвӑласа ҫырнӑ халӑх юмахӗсем урлӑ та курма пултаратпӑр. Ҫакна май эпир поэтӑн фольклорпа усӑ курса ҫырнӑ произведенийӗсене тӗпчесе тухма тивӗҫлӗ.

## IV.

Малтанах каларӑмӑр, К. В. Иванов халӑх пултарулӑхӗпе питӗ интересленнӗ. Унӑн чӗрине чӑваш юрри-сӑввисемпе юмахӗ-халапӗсем ҫеҫ мар, ытти тӗрлӗ искусствисем те хавхалантарнӑ. Сӑмахран, К. В. Иванов мӗн пӗчӗкренех алӑста ӗҫне юратнӑ, ҫурт-йӗр строительствине илемлетекен чӗнтӗрлӗ тӗрӗсене сӑнанӑ, вӗсене хӑй тума вӗреннӗ. Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ тапхӑрта, вӑл хӑйпе пӗрле пурӑнакан воспитанниксенчен нумай юрӑсем, юмахсем тата ваттисен сӑмахӗсене ҫырса илнӗ. Ухсай Яккӑвӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, К. В. Иванов 1910-мӗш ҫулта, хӗлле, Кайраклӑ ялӗнче фольклор материалӗсем питӗ нумай пуҫтарнӑ. Фольклор пухасси вӑл вӑхӑтра пӗр К. В. Ивановшӑн ҫеҫ мар, Чӗмпӗрти шкулта вӗренекен мӗн пур ачасемшӗн хисеплӗ ӗҫ шутланнӑ. Ку ӗҫе шкул директорӗ И. Я. Яковлев хӑй ертсе пынӑ. Пухнӑ материалсене нихӑшне те ҫухатман, вӗсене пурне те пӗрле ҫӗлесе хурса питӗ тӗплӗн усранӑ. Каярахпа вӑл материалсем пӗтӗ-

мӗшпе тенӗ пекех Н. И. Ашмарин аллине куҫса, чӑваш чӗлхи словарӗ тӑвас ӗҫре усса юранӑ. Ҫав материалсем хушшинче Г. Т. Тимофеев ҫырнӑ „Тӑхӑр ял“, М. Ф. Федоров ҫырнӑ „Арҫури“ поэмӑн тӗрлӗ вариантлӑ алҫырӑвӗсем т. ыт. ҫпаласем те сыхланса юлнӑ. Вӗсене К. В. Иванов хӑйсен шкулӗнчен илсе каиччен пӗрре ҫеҫ мар вуланӑ пулас пулать. Вӗсем поэта хӑйне те халӑх творчествине тата ытларах юратма, ҫав творчество тӑрӑх оригиналлӑ произведенисем ҫырма хавхалантарнӑ. Поэт чӑнах та хавхаланать, пӗтӗм чун-чӗрипе хӗрӳленсе кайса чӑваш юмахӗсене сӑвӑласа илемлетме пуҫлать тата ҫав вӑхӑтрах „Нарспи“ поэмӑна ҫырма тытӑнать. Эпир кунта чи малтан К. В. Ивановӑн юмахӗсене пӑхса тухӑпӑр.

V.

К. В. Иванов мӗн пурӗ виҫӗ юмах сӑвӑласа ҫырса хӑварнӑ: „Икӗ хӗр“, „Тимӗр тылӑ“ тата „Тӑлӑх арӑм“. Малтанхи икӗ юмахӗн сюжетне поэт халӑх юмахӗсенчен илнӗ, виҫҫӗмӗшӗн сюжетне хӑй ӑсӗнченех шухӑшласа кӑларнӑ темелле, мӗншӗн тесен халӑх творчествин репертуарӗнче ун пек сюжетсем пачах та тӗл пулмаҫҫӗ.

„Икӗ хӗр“ ятлӑ кӗске юмахӑн содержанийӗ ҫакӑн пек. Ашшӗ хӑйӗн аслӑ хӗрӗпе кӗҫӗн хӗрне виҫӗ ыйту парать: ҫак ҫӗр ҫинче мӗн мӑнтӑр, мӗн тутлӑ, мӗн ҫемҫе? Аслӑ хӗрӗ ҫапла ответлет: ҫӗр ҫинче санӑн кӑвак лашу мӑнтӑр, пыллӑ карас пит тутлӑ, мамӑк тӳшек пит ҫемҫе, тет. Аслӑ хӗрӗн ответне ашшӗ тӗрӗс тесе ырлать, уншӑн ӑна хӑй пуянлӑхӗн ҫуррине халалать. Кӗҫӗн хӗрӗ ашшӗ ыйтӑвӗсене хирӗҫ пачах урӑхла ответсем парать, вӑл ҫапла калать: тӗнчере ҫӗр пуян, ыйхӑ тутлӑ, алӑ ҫемҫе (мӗншӗн тесен, темӗнле ҫемҫе мамӑк минтер ҫинче выртсан та ҫын хӑйӗн пуҫӗ айне аллине хума юратать), тет. Ашшӗ ку ответсене тӗрӗс мар тесе шутласа, кӗҫӗн хӗрне килтен хӑваласа ярать.

Ӗлӗкхи кивӗ саманан йӗркисем пӗтӗмӗшпех ултавпала мӑшкӑл ҫинче никӗсленсе тӑнӑ. Этемӗн обществӑри хакне ӑс-пуҫпа пултарулӑх мар, мулпа пуянлӑх татса панӑ. Мулпа пуянлӑх пулсан, обществӑри вырӑн та, хисеп те, чап та пулнӑ. Хӑйсен чӗрисенче тӗрӗслӗх хӗлхемне ҫӗклесе ҫӳрекен, анчах та мулпа пуянлӑх тытайман этемсем вӑйлисем умӗнче йӑпӑлтатмалла, вӗсене пӑхӑнса тӑмалла пулнӑ.

Капитализм условийӗсенче этем обществин отношенийӗсене укҫа мӗн тери пӑсса яни ҫинчен К. Маркс ҫапла ҫырнӑ:

„...деньги суть всеобщее превращение „индивидуальностей“, которые они превращают в их противоположность и придают им свойства, обратные их собственным свойствам.

В качестве этой извращающей силы выступают они затем и против индивида и против общественных и тому подобных связей, претендующих на то, чтобы быть существами для себя. Деньги превращают верность в неверность, любовь в ненависть, ненависть в любовь, господина в слугу, безрассудства в рассудок и рассудок в безрассудство“ (К. Маркс, Философско-экономические рукописи).

Капитализм саманин ҫав тискер йӑлисене эпир К. В. Ивановӑн «Икӗ хӗр» ятлӑ юмахӗнчен те лайӑх куратпӑр. Кунта хӑйне пурнӑҫ законӗсем парса ларакан ҫын вырӑнне картакан тӑмсай старике юрас тесе, унӑн аслӑ хӗрӗ куҫ-кӗретех тӗрӗс мар сӑмахсем калать пулин те, старик ун сӑмахӗсене тӗрӗсе кӑларать, м. т. ӑна чӑннипех те хӑй лаши нимӗнрен мӑнтӑр, хӑй ҫыврӑкан тӳшек нимӗнрен ҫемҫе, хӑй ҫисе пурӑнакан караслӑ пыл нимӗнрен тутлӑ,—пӗр сӑмахпа каласан, хӑйӗн мулӗ нимӗнрен вӑйлӑ критери.

Виҫӗ ыйту тупсӑмне эгоист-старик хӑйӗн чунне киллентерекен вак-тӗвексемпе тӗрӗслӗхе кӑларать. Анчах та Иванов ҫак ирсӗр йӗркепе ниепле те килӗшме пултараймасть. Тӗрӗслӗх ни укҫара, ни мулра, ни этем чунне киллентерекен вак-тӗвекре мар. Тӗрӗслӗх нимӗнле вак-буржуаллӑ эгоизма та пӑхӑнма пултараймасть. Тӗрӗслӗхе тасалӑхра тытас тесен, никам умӗнче те чуралла йӑпӑлтатмалла мар. Ҫак ҫул ҫине тӑратать те К. В. Иванов старикӗн кӗҫӗн хӗрне, вӑл, хӑйӗн аппӑшӗ пек, ашшӗ умӗнче ыр ятлӑ пулассишӗн ҫунмасть, хӑйне мӗн пулассинчен нимӗн хӑрамасӑрах, явленисене мӗнле ӑнланать, ҫавӑн пек каласа парать.

Халӑх юмахӗсенче кун пек сюжетсем нумай тӗл пулаҫҫӗ. К. В. Иванов сӑвӑланӑ юмахпа ҫав сюжетлӑ ытти юмахсем хушшинчи уйрӑмлӑх ак ҫакӑнта: халӑх юмахӗсем кӗҫӗн хӗрӗн ӑслӑ отвечӗсене ытларах ҫӗклеҫҫӗ пулсан, Иванов юмахӗнче—кӗҫӗн хӗре тӗрӗслӗхшӗн асап тӳсме тивет. Кӑна К. В. Иванов ӗлӗкхи саманан ирсӗр сӑн-сӑпатне тӗрӗс сӑнласа кӑтартас тесе ҫапла тунӑ. Вӑл саманара тӗрӗслӗхпе мала тухма пулман. Капитализм самани пурнӑҫ тӗрӗслӗхне таптаса путарса пынӑ. Ҫакна Иванов питӗ лайӑх чухланӑ, чухланӑ ҫеҫ те мар, ҫав тӗрӗслӗхшӗн никам умӗнче те чӗтресе тӑма кирлӗ маррине ҫирӗплетсе панӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, К. В. Иванов халӑх юмахӗн идеине татах та ытларах тарӑнлатса, социаллӑ шухӑшпа ҫивӗчлетнӗ. Ҫакна пирӗн хӑш-пӗр исследовательсем ӑнлансах ҫитерейменҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем Иванова нимӗнрен малтан халӑх юмахӗсене литература меслечӗсемпе ҫеҫ илемлетсе тарӑнлатнӑ поэт пек кӑтартаҫҫӗ. Ку тӗрӗс мар. К. В. Иванов халӑх юмахӗсене илемлетнипе пӗрлех, пуринчен ытларах социаллӑ шухӑшсемпе тарӑнлатнӑ. Кӑна эпир унӑн тепӗр юмахӗнчен те питӗ лайӑх курса тӑратпӑр.

* * *

«Тимӗр тылӑ» ятлӑ сӑвӑллӑ юмахӑн содержанийӗ ҫакӑн пек. Таса мар, тӑвӑр пӳртре пурнакан суккӑр чӑваш тухатмӑш-карчӑкӑн тимӗр тылӑ пур. Ҫав тимӗр тылӑ пулӑшнипе карчӑк хӑйӗн кӗҫӗн кинӗн пуҫне ҫиме шухӑшлать. Кинӗ тӑванӗсем патне курма кайса килесшӗн, анчах карчӑк ӑна малтанах ямасӑр тӑрать, виҫҫӗмӗш хут йӑлӑннӑ хыҫҫӑн тин хӑнана кайма ирӗк парать. Ҫав хушӑрах вӑл «кинӗн пуҫне ҫиме» кавар туса ҫитерет. Кинӗ ҫавна сисет те, виҫӗ асамлӑ юсман пӗҫерсе хатӗрлет. Ҫакӑн хыҫҫӑн кӗҫӗн кин ҫула пуҫтарӑнса тухать. Вӑл тухнӑ-тухманах тухатмӑш хӑйӗн тимӗр тыллине „кинӗн пуҫне ҫиме“ кӑларса ярать. Тимӗр тылӑ нимӗн айӑпсӑр ҫамрӑк кине икӗ хутчен хӑваласа ҫитет, анчах та кинӗ хӑйӗн асамлӑ юсманӗсене пӑрахса хӑвара-хӑвара хӑтӑлать. Виҫҫӗмӗш хутӗнче кин, хӑйӗн тӑванӗсем патне ҫитсе ӳкнӗскерех, никам та пӳрте кӗртменнине пула юлашки юсманне ывӑтать те, хӑранипе хӑй те вилсе каять. Тимӗр тылли кинӗн пуҫне ҫиеймен пирки каялла шалтлатса таврӑнса тухатмӑш-карчӑкӑнне хӑйӗнне пуҫне касса татать. Ҫав каҫах тата пуян ҫыннӑн арман пӗвийӗ татӑлса каять. Ҫапла вӗҫленет К. В. Иванов сӑвӑланӑ иккӗмӗш юмахӗ.

Ку юмахра эпир нимĕнрен малтан Иванов чăвашсен тĕшмĕш йăлисенчен мăшкăласа кулнине тата çав йăласен социаллă тымарĕсем ăçтан тытăнса килнине уçса панине куратпăр. Патша саманинче тĕттĕм чăвашсем хушшинче юмăççемпе тухатмăшсем тĕрлĕрен тĕшмĕшлĕхсем сарса халăха улталаса пурăннă. Çав тĕшмĕшлĕхсем „Тимĕр тылă“ юмахри кĕçĕн кин пек нимĕн айăпсăр таса чĕрелле этемсен пурнăçĕсене минтретсе пынă. Халăх тĕшмĕшлĕхе ĕненет, унтан хăтăлмалли тĕрлĕрен меслетсем шырать (асамлă юсмансем çинчен астăвăр!), анчах та тĕттĕмлĕх лачакине путса ларнă халăха çав асамлă юсмансем те хăтараймаççĕ. Çăлăнăç кунта урăххинче шырамалла. Вăл—тухатмăшсемпе юмăççене ĕненме пăрахасси, вĕсене хăйсене тĕпĕ-тымарĕпех тĕп тăвасси. Çакăн пек композиципе тăвать те Иванов хăйĕн юмахне. Тимĕр тылă куçа çӳпĕ кĕртнипе тухатмăша тухнă карчăк хăйĕн тухатăвĕсемпе нимĕн айăпсăр чунсене пĕтерсе пырать пулсан, текех апла ан пултăр тесе, ăна хăйне пĕтермелле. Çавăнпа та ĕнтĕ, тĕшмĕшлĕхпе çеç темĕнле хăрушă хаяр вăй пулса тăнă тимĕр тылла Иванов тухатмăш çине вĕскĕртсе ярать, унăн пуçне татса ывăттарать. Мĕншĕн тесен, тимĕр тылă мар кунта айăплă, халăх хушшине тĕшмĕшлĕх саракан тухатмăшсем айăплă. Ку çеç те мар: çав тĕшмĕшлĕхсем пуянсемшĕн кăна, халăха улталаса, тĕттĕмре тытса усрама усăллă пулнă. Çавăнпа та Иванов вĕсене те хĕрхенсе тăмасть, тухатмăш пĕтнипе пĕрлех пуян çыннăн арман пĕвине те таттарса ярать. Эхĕр те эсир тĕрлĕ ăрăмçă-асамçăсемпе тухатмăшсем урлă халăх куçне суккăрлатса тăратăр пулсан, пĕтĕр, шар курăр вĕсемпе пĕрле хăвăр та!—тесшĕн Иванов çав тĕттĕм патшалăхăн тĕшмĕш саракан представителĕсене. Кунта ĕнтĕ эпир Иванов хăйĕн халăхне çутта кăларассишĕн, тĕрлĕ тĕшмĕшлĕх тыткăнĕнчен хăтарассишĕн чунтан чĕререн çуннă просветитель пулнине куратпăр.

Ку юмахăн халăх хушшинче çӳрекен вариантĕ урăхларах. Унта тимĕр тылă тухатмăш-карчăк пуçне касса татни те, пуян çыннăн арман пĕвийĕ татăлса кайни те çук. Ун вырăнне — ирхине кинĕн пиччĕшĕсем выльăхсене апат пама тухаççĕ те карта юписем çумне пыршăсем кумса хăварнине кураççĕ. Вĕсем çав пыршăран хĕлĕх тăваççĕ, унтан кĕсле çине хурса калама тытăнаççĕ. Кĕсли кĕвĕ вырăнне этем чĕлхипеле хурлăхлă юрă юрлама пуçлать. Пиччĕшĕсем ăна çӳп шăтăкне ывăтаççĕ, вара кĕслерен вĕсен хуп-хура йăмăкĕ пулса тăрать.

Халăх юмахĕн идеи те киревсĕр тĕшмĕшлĕх халăха тĕп тунине кăтартса парать, анчах кунта этем пĕрре пĕтнĕ пулин те, пурĕпĕр чĕрĕлсе тăрать. Çакăнта ĕнтĕ халăх юмахĕн оптимизмĕ. Анчах К. В. Ивановăн юмахăн оптимизмĕ те, социаллă витĕмлĕхĕ те питех кирлĕ пулнă. Çавăн пирки вăл халăх юмахĕн вĕçне улăштарса, татах та тарăнрах, витĕмлĕрех, обществăн кивĕ йĕркисене вичкĕнтерех питлемелле тунă.

* * *

Виççĕмĕш юмахĕн („Тăлăх арăм“) содержанийĕ çапла. Виçĕ пĕр тăван çамрăксем вăрçăра çапăçаççĕ. Вĕсен арăмĕсем, хăйсен упăшкисенчен хăшĕ чĕррипе хăшĕ виллине пĕлес тесе, кашăксем ывăтаççĕ. Кĕçĕн кинĕн кашăкне юн тулать. Вара вăл упăшки вилни çинчен пĕлет те ăна шырама вăрçă хирне тухса каять. Вăрçа хирĕнче ăна икĕ аслă пиччĕшĕ тĕлпулаççĕ, шăллĕ ăçта выртнине каласа параççĕ. Çакăн хыççăн кĕçĕн кин хăйĕн юратнă упăшкине шыраса тупса, унăн виçĕ çӳç пĕрчийĕпе çакăнса вилет.

Ку юмаха К. В. Иванов 1907—08 ç. ç. çырнă. Çав çулсем умĕн вырăс правительствишĕн ăнăççăррăн иртнĕ япун вăрçи пысăк кăмăл-туйăмлă çамрăк ачана — Иванова — хумхантармасăр хăварма пултарайман. Вăрçăра пĕтнисен семьисем тăлăха тăрса юлса тертленнисем, аманса, суранланса, алсăр-урасăр таврăннă салтаксен ылханлă шăпи, вăрçă хыççăнхи хурлăхлă та юхăнчăклă пурнăçăн тĕксĕм тĕрленчĕкĕсем, — çаксем пурте, ик-виçĕ çул иртнĕ хыççăн та, Ивановăн кăварлă чĕрине нихăçан тӳрленми чĕрĕ суран пек ыраттарса тăнă. Патша вăрçи халăхшăн сиенли çинчен, вăл халăха хĕн-хурпа асапсăр пуçне нимĕн те паманни çинчен поэт чăваш халăхне каласа пама пулнă. Анчах мĕнле майпа çитермелле-ха çак тĕрĕслĕхе тĕттĕмлĕхре сехĕрленекен халăх умне? Ун çинчен калама жандармери йыттисем çăвар уçтарман, çавăнпа · та Иванов чеерех меслет шыраса тупать, — вăл çав шухăша юмах урлă каласа парать. «Тăлăх арăм» юмаха вулană чух пирĕн умма вăрçă хирĕн хăрушă та тискер картинĕсем, унта-кунта сапаланса выртакан ятсăр геройсен пуç шăммийĕсем, çĕтĕк-çатăк тумланнă тăлăх-туратсем чăн-чăн пурнăçри пек тухса тăраççĕ. Çакăнпа пĕрлех эпир поэтăн гуманитарлă идеисене ăнланса илетпĕр, вăл пысăк саспаллипе çырăнакан этеме пĕтĕм чун-чĕрипе юратнине, ăна нимĕн тĕлсĕр-йĕркесĕр пĕтернине хирĕç хĕрӳллĕн протестленине туятпăр. Çапла ĕнтĕ К. В. Иванов хăйĕн юмахĕсемпе кивĕ пурнăçăн чуна илекен тискерлĕхĕсене хирĕç, этем тивĕçлĕхне таптаса тăкнине хирĕç, мул умĕнче чуралла чĕтресе тăнине хирĕç, халăха пăчлантарса минтретекен тĕшмĕшлĕхе хирĕç протестленĕ. Халăх творчествин тĕслĕхĕсене вăл литературăна çаплипех, нимĕн улăштармасăр мар, тĕпренех çĕнетсе, эмоцилле вăй парса, социаллă идейăсемпе тарăнлатса, çивĕчлентерсе кĕртсе пынă. Çавăнпа та вăл юмахсем халĕ те хăйсен художествăллă пахалăхĕпе социаллă хакне çухатмаççĕ.

## VI.

К. В. Ивановăн тĕлĕнмелле вăй-хăвачĕ пĕр вăхăтрах темиçе тĕрлĕ ĕç туса пынă. 1906—08 çулсенчех вăл хăйĕн вилĕмсĕр «Нарспине» çырса пĕтерет. Унăн сюжетне поэт ăçтан илни çинчен тĕрлĕрен шухăшсем çӳреççĕ. Хăшĕсем каланă тăрăх, ăна К. В. Иванова Чĕмпĕрти шкул хуралçи И. М. Маркелов (Чалдун) каласа панă пулать, теприсем пĕлтернĕ тăрăх вăл сюжета К. В. Иванов Гаврил Кореньковран илтнĕ имĕш. Çак икĕ тĕрлĕ калаçусенче пĕрпеклĕх те пур: лешсем те, кусем те „Нарспи“ сюжечĕ халăх хушшинче халап халлĕн çӳрени çинчен ĕнентерсе параççĕ. Апла пулсан, пирĕн К. В. Иванов „Нарспи“ сюжетне ăçтан илнине пĕлес пулсан, чи малтан чăваш юмахĕсене пăхса тухмалла Пур-и вĕсен хушшинче „Нарспи“ майлă сюжетсем е ăна аякран çеç аса илтерекеннисем анчах тĕл пулкалаççĕ.

„Нарспи“ содержанине пурте пĕлеççĕ. Вăл — икĕ кăвар пек вĕри чĕреллĕ çамрăкăн телейсĕр юратăвĕ Тĕп идея — юрату пуянлăхра, мулра мар, пĕрнепĕри чунтан савса пурăннинче. Вăл юрату капиталистла обществăн ирсĕр йăлисене пăхăнма пултараймасть, вăл—ирĕклĕ юрату пулмалла.

Пур-и пирĕн чăваш фольклорĕнче çакăн пек мо-

тэсем? Пур. Ăна эпир ак çак халапран лайăх куратпăр. Пĕр çĕрме-пуян чăвашăн виçĕ хĕр пулнă. Ікĕ аслă хĕрне старик хăй пекех пуян çынна качча харать, кĕçĕнни, ашшĕ ирĕкне пăхăнмасăрах, хăйĕн ч нĕ юратнă, нимĕн килсĕр-çуртсăр кĕтӳçе тухать. Ку хĕрĕн аслă аппăшĕсем, пуянсене качча тухнă лин те, пурна-киле чухăнланса кайса телейсĕре тухаççĕ, кĕтӳçĕпе пĕрлешни — пурлăх та тăвать, телей те тупать. Вывод: телей—пуянлăхра мар.

Шăп та шай „Нарспи“ поэмăн идеи! Кун пек сюжетсем чăваш халапĕсем хушшинче татах та пур. Вĕсем тăрăх эпир „Нарспи“ поэмăн тĕп мотивĕсем чăнахах та халăх хушшинчен çуралса тухнине куратпăр. «Нарспи» поэмăн сюжетне К. В. Иванов Маркеловран илтнĕ-и е урăххинчен-и, — вăл пире халь кирлех те мар, мĕншĕн тесен, кирек епле пулсан та, вăл халăх хушшинче пайтах паллă япала пулнă. Анчах К. В. Иванов илтнĕ халапа мĕнле илтнĕ çаплипех сăвăласа паман, вăл пысăк художник пулнă, çавăнпа халăх хушшинчи сюжет ăна хăйĕн произведенийĕнче каласа панă шухăшсене халăха çывăхрах, ăнланмалларах тума кирлĕ пулнă. Маларах илсе кăтартнă халăх юмахĕнчи кĕçĕн хĕр активлă действисем туни курăнмасть. Унăн хăй телейĕшĕн кĕрешесси мĕн пурĕ те пĕр пусăм тунипе кăна (ашшĕ ирĕкĕ урлă качча тухни) вĕçленет. «Нарспи» пачах урăхла. Ăна ашшĕсем ирĕксĕр качча параççĕ. Вăл пăлханать, çунать, ашшĕ-амăш ирĕкне хирĕç те, вăл вăхăтри обществăн йăлисене хирĕç те активлăн протестлеме тытăнать. Юлашкинчен вăл çак кĕрешӳре хăй те пĕтет.

Çапла вара, К. В. Иванов фольклор произведенийĕн идеине тата çӳлĕрех пусăма çĕклесе, хăйĕн халăхне вăл вăхăтри обществăллă пурнăçăн пăнтăхнă йăлисемпе йĕркисене хирĕç кĕрешме чĕнет. Кун пек туни, паллах, фольклорти реакцилле-монархистла шухăшсене хирĕç те кĕрешме пулăшнă.

Халăх яланах хăйĕн ĕмĕртенхи ĕмĕтне шырать. Вăл ăна чăн-чăн пурнăçра тупаймасть пулсан, юмаххалапсенче, сăвă-юрăсенче тупать. «Нарспи» поэмăра та чăваш халăхĕ хăйĕн ĕмĕчĕсене шыранă, вăл ĕмĕте тупас пулсан мĕн тума кирли çинчен пĕлнĕ. Çавăнпа «Нарспи» поэмăна халăх хăй поэми вырăнне йышăнса, хăйĕн репертуарне çирĕп кĕртсе хăварнă, ăна чĕлхерен-чĕлхене каласа çӳренĕ, унпала кӳтсе çитнĕ чуна йăпатнă, пулас шанчăка хавхалантарнă, йӳçсе çитнĕ çилле çĕклентернĕ.

* * *

«Нарспи» поэма тĕп шухăшĕпе çеç мар, ытарма çук, илемĕпе те, кĕмĕл шăнкрав пек янраса тăракан сăвви-кĕввисемпе те халăха питĕ çывăх произведени. Поэт çураличчен 50 çул ĕлĕкрех «чăваш чĕлхинче мĕн пурĕ те 1646 сăмах анчах» тесе лĕпĕртетнĕ пулсан, вунçичĕ çулхи Ивановăн генийĕ чăваш чĕлхин пĕтĕм пуянлăхĕпе янравлăхне, вăйĕпе хăватне кăтартса панă. Вăл ăна хăй халăхĕн сăмах пуянлăхне, сăвви-юррисене, юмах-халапĕсене тĕплĕн пĕлсе тăнипе çеç тума пултарнă.

К. В. Иванов хăйĕн творчествинче фольклорпа мĕнле усă курнине пăхса тухар.

К. В. Иванов халăх поэзийĕн мĕн пур тĕслĕхĕсемпе формисене питех те лайăх пĕлсе тăнă. Пĕлсе тăнă çеç те мар, вĕсемпе хăйĕн произведенийĕсенче пултаруллăн усă курнă. Чи малтан вăл хăй сăввисене халăха ăнланмалларах пултăр теçе, халăх юррисен формипе çырнă. Халăх юррисем, тĕпрен илсен, çичĕ сыпăклă силлабикăллă сăвă формипе каλăпланса пыраççĕ. Вĕсем пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тăватшар йĕркеллĕ куплетсемлĕ. Куплетри йĕркесем мăшăрăн-мăшăрăн çыхăнса пыраççĕ. Малтанхи икĕ йĕрки çутçанталăкри е пурнăçри мĕнле те пулин явлени çинчен сăнласа парать, юлашки икĕ йĕрки юрăçăн шалти кăмăл-туйăмĕсене уçса кăтартать. Çавăн пек тунине вырăсла „прием психологического параллелизма“ теççĕ. Халăх юррисен тĕп никĕсĕ пулса тăракан психологиллĕ параллелизм К. В. Ивановăн творчествинче те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ăна эпир нимĕнрен ытларах „Нарспи“ поэмăра тĕл пулатпăр. Акă ун пек тĕслĕхсем:

Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ӳсет;
Аслă Силпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ӳсет.

Нарспи илемне кунта автор сар чечекпе танлаштарса кăтартать. Чăвашсен кăмăлĕ тăрăх ялти чи илемлĕ хĕр—сарă хĕр, вăл хирти сар чечек евĕрлĕ. Çавăнпа та:

Хирти сарă чечеке
Ăшă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каччă юратмĕ?— .

тесе çырать поэт. Ку тĕслĕхсенче иккĕшĕнче те автор психологиллĕ параллелизмпа усă курнă. Малтанхи икĕ йĕркисем чечекпе унăн илемĕ çинчен калаççĕ, юлашки йĕркисем Нарспи илемне чечекпе танлаштарса кăтартаççĕ.

Психологиллĕ параллелизм меслечĕпе тунă вырăнсем «Нарспи» поэмăра татах та пур. Акă, сăмахран, Нарспи Михетер килĕнче епле хуйхăрса, чĕрине суранлантарса пурăннине автор епле сăнласа кăтартать:

Хирте ака айĕнче
Çерем лап-лап касăлать.
Усал хуйхă-суйхăран
Нарспи пуçĕ усăнать.
Куллен-кунах тĕнчене
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет;
Хуйхă-суйхă кунран-кун
Нарспи чĕрине çиет.

Хăйĕн сăввисене халăх поэзийĕн формисемпе усă курса çырнипе К. В. Иванов вĕсене халăха çывăх, чĕрене хумхантармалла тăвать. Ку йĕркесене вуласа тухсан ирĕксĕрех Нарспи хуйхи санăн чĕрӳне те ыраттарать, унăн вĕри куççулĕ санăн куçусене те шывлантарать. Нарспи хуйхи—вулакан хуйхи пулса тăрать.

Иванов сăввисенче эпир халăх поэзийĕн ытти формисене те нумай тĕл пулатпăр. Сăмахран, анатри чăвашсен юррисенче час-часах пуплеври подлежащисем нумайлă хисепре, сказуемăйĕсем пĕрреллĕ хисепре тăнине курма пулать. Халăх поэзийĕн çак форминчен те хăраса тăман талантлă поэт. Унăн нумай енлĕ пуян творчествинче эпир вăл тĕслĕхсене те куратпăр: Акă вăл:

1) Çĕр çĕмĕрсе каччăсем
Ташлать хапха умĕнче.
Пурăнăçсем, ах, аван
Аслă Силпи ялĕнче!

2) Утса-утса пынă чух
Шăнкăртатать тенкисем.

Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччăн чĕри çĕкленет.

3) Апатланса икĕ чун
Хĕрӳ сăмах калаçать.
Ватă карчăк—амăшĕ
Шăппăн итлесе ларать...

4) Ырă евчĕн хапхисем
Уçăлать те хупăнать.

К. В. Иванов халăхăн пурнăçне, унăн йăлисене, уявсемпе праçниксенчи йĕркисене тĕплĕн пĕлсе тăнă. Вăл вĕсене «Нарспи» поэмăра нихăçан манмалла мар витĕмлĕн те ĕнентерӳллĕн сăнласа хăварнă. Мĕнешкел аван çырса кăтартать Иванов авалхи чăвашсен туй йĕркисене! Акă Михетер патĕнче элес-мелес туй сикет. Шалта, пӳртре, шур пĕркенчĕк айĕнче Нарспипе ватă кĕрӳ Тăхтамана авалхи йăла тăрăх «пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма» пил тăваççĕ:

Нарспи, хĕрĕм, пил сана!
Упăшкуна ан пăрах,
Аван пурăн унпала,
Тату пулăр яланах.
Итле ăна, йăваш пул,
Усал çынпа ан çыхлан,
Ĕçне ĕçле, ĕçчен пул,
Кирлĕ марпа ан хăтлан!

Е тата:

Сывă пулччăр, пур пулччăр,
Ача-пăчаллă пулччăр;
Ырă-тату пурăнччăр,
Усал сăмах ан илтчĕр.
Ĕçĕр-çийĕр, тăвансем,
Ĕмĕр пĕрле пурăнар!

Тулта туй халăхĕ кĕрлет кăна. Нарспие пил туса пĕтерчĕç. Халĕ ĕнтĕ каллех ташă-юрă, вăйă-кулă пуçланать.

Мĕншĕн шăппăн ларатăр,
Мĕншĕн шăппăн ларатăр?
Шăппăн-шăппăн лармашкăн
Шăпчăк чĕппи мар эпир,—

тесе юрласа хавхалантараççĕ туй çыннисем пĕрне-пĕри. Кунта çырса кăтартнă йăласем те, юррисем те пĕтĕмĕшпех халăхăн. Халăх ку йĕркесене вуласан, тӳрех хăйне палласа илет, хăй чунне курать.

Пирĕн хальхи хăш-пĕр поэтсем халăх йăлисене, унăн хăйне расна уйрăмлăхне пачах та вĕренме тăрăшмаççĕ. Халăхăн чунне курмаççĕ вĕсем. Çавăнпа та вăл поэтсен сăввисем чунсăр-чĕресĕр, туйăмсăр-сисĕмсĕр, нимĕн хусканусăр пулса тухаççĕ. К. В. Иванов хăйĕн халăхне наци колоричĕ паракан енсене пĕтĕмпех лайăх тĕпчесе пĕлнĕ. Вăл енсене хăйĕн творчествинче ытларан та ытларах палăртнă. Туйшыльăксем пулса иртеççĕ-и, инкек-синкексенчен сиплеççĕ-и, çынсем пĕр-пĕрне пехил тăваççĕ-и е ылханаççĕ-и,—çак действисенче пуринче те Иванов чăваша хăй чунĕпе, хăйĕн сăн-сăпачĕпе, хăйĕн кăмăлĕпе илсе кăтартать.

Ват аттесем, аннесем,
Ырă курăр çăтмахра,
Пирĕн çăкăр-тăварсем
Пулччăр сирĕн умăрта,—

тенĕ йĕркесене вулатпăр та эпир, тӳрех чăвашсен ваттисене асăнмалли йăлисене аса илетпĕр;

Сивĕ кунсем килĕç те,
Шăнса кайĕ вĕри юн.
Хытă кунсем килĕç те,
Хытса кайĕ çемçе чун.
Вĕри кунсем килĕç те,
Вĕриленĕ шăннă юн,
Хытнă çĕртен ирĕлсе
Çунса кайĕ çемçе чун,—

тенисене вуласан, юмăççемпе йăмçăсен магиллĕ хăтланăвĕсене аса илетпĕр.

Çитмĕл тинĕс леш енчен
Килет карчăк Шап тан,
Вĕр, сур, карчăк, яшкана—
Пĕтĕр усал Тăхтаман!
Утмăл тинĕс уттинче
Ларать, сикет йĕс пукан,
Сикех, сикех, йĕс пукан,—
Пĕтĕр усал Тăхтаман!
Вăтăр та нĕр ту çинче
Йĕс хурапра пиç, яшка.
Çав яшкара пиç, çĕлен,
Пиç тамăкра, упăшка!—

тенисене вуласан, тухатмăшсен çан-çурăма сăрхăлтаттарса яракан хăрушă такмакĕсем аса килсе каяççĕ. Çакăн пек вырăнсене вуласан действи ăçта, мĕнле обстановкăра, хăш вăхăтра пулса иртнисене питех те çăмăллăн туйса илетĕн.

Поэмăн тĕп геройĕ — Нарспи. Унăн образĕ чи илемлĕ, чи çепĕç, чи кăмăллă пултăр тесе, ăна поэт татах та ытларах халăха çывăх тума тăрăшнă. Уявра вăйă калать-и вăл, килте алă ĕç тăвать-и, хăнасене кĕтсе апат-çимĕç хатĕрлет-и, хăйĕн мĕскĕн шăпине пула куççуль юхтарать-и, — пур обстановкăра та Нарспи чăваш халăхĕ хушшинчен тухнă ирĕк чĕреллĕ хĕр иккенне туйса тăратăн. Акă вăл уявра вăйă калать, шăпчăк сасси пек сассипе уяв юррисем янратать.

Е пурçăн çип илет те,
Юрла-юрла тĕр тăвать;
Е çĕлеме ларать те,
Çĕвви шăрçа пек пулать;
Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă
Пĕр кĕрет те пĕр тухать.

Акă тата сак çинчи кушакĕ питне çума пуçларĕ. Нарспийĕн „апат хатĕр хăнашăн, алли-ури çăмăлран“. Пĕтĕмпех халăх сăмахлăхĕ, халăх сăнавĕсем, йăлисем.

Поэмăри чуна кайса тивекен вырăнсенчен пĕри—хĕр йĕни. К. В. Иванов кунта та халăх поэзийĕн пуянлăхĕпе анлăн усă курать. Ашшĕ-амăшне ӳпкелешсе хӳхленĕ чух поэт Нарспие мĕнле сăмахсемпе хӳхлемеллине хăйĕнчен каласа тăмасть. Нарспи хăех пĕлет ăна, мĕншĕн тесен авалхи саманара чуралăхра пурăннă чăваш хĕрарăмĕ ĕмĕртенех хăйĕн хуйхи-суйхипе чунхавалне качча кайнă чух куççуль тумламĕсем витĕр юхтарса «хĕр юрри» юррисене вырнаçтарса хăварнă. Нарспин шăпи те çав-çавах. Вăл та хăйĕн ашшĕ-амăшĕсем мул хыççăн кайса хĕрĕн пуçне çинишĕн татăлса йĕрет:

Ей, аттеçĕм, аннеçĕм,
Мĕншĕн çирĕр хĕр пуçне,
Мĕншĕн патăр хĕрĕре
Çичĕ ютăн аллине?—

тесе юрлать вăл. Пĕр Нарспи кăна хӳхленĕ-ши чунтан-чĕререн татăлса çакăн пек хурлăхлă сăмахсемпе? Çук, хăйсен ирĕкĕ урлах тантăшĕсенчен уйăрăлма пӳрнĕ мĕн пур чăваш хĕрĕсем качча кайнă чух çавăн пек сăмахсемпе хӳхленĕ.

Çапла ĕнтĕ чăваш поэзийĕн классикĕ К. В. Иванов хăйĕн творчествинче халăх сăмахлăхĕн мĕн

пур формисемпе тĕ питĕ тĕплĕн тата ăстан усă курнă. Çавăнпа та унăн поэзийĕ халăха çывăх, ăнланмалла. Анчах та К. В. Иванов халăх творчествипе механически мар, мĕн алла лекнĕ çавна йышăнса мар, унăн чи паха тĕслĕхĕсене çеç суйласа илсе усă курнă. Фольклор тĕслĕхĕсене вăл унта-кунта нимĕн тĕлсĕр сапаласа яман, хăйсене килĕшӳллĕ вырăнсене калăпласа пынă. Çак енчен вăл пирĕн чăваш литературине епле аталанса пымаллине çул кăтартса парса хăварнă.

Вырăс литературинче халăх творчествин вăйĕпе ĕмĕр тĕксĕмленми илемне никамран малтан А. С. Пушкин нихăçан пулман виçене çĕкленĕ пекех, пирĕн чăваш литературинче К. В. Иванов хăй халăх фольклорĕн хăватне кăтартса панă. Унăн произведенийĕсем халăх чĕринчен, халăх кăмăлĕнчен, халăх шухăшĕнчен тухса пынă, халăх сăмахлăхĕпе сĕткенленсе чечекленнĕ. Çавăнпа та вĕсене халăх хăйĕн чи паха пуянлăхĕ вырăнне шутласа, нихăçан манмасла чĕрере тытса усрать.